Самраксен хаҫачĕ 2007.01.19

# Пурҫăн пурнăҫ хитрийĕ

ЛЮДМИЛА Бахмисова чăваш поэзийĕнче хăй сассипе ĕҫлекен поэт. Вăл сăвă ĕренкине силлабо-тоника кĕвĕлĕхĕпе ҫырлахтарса пыма аван пĕлет пулин те авалтан пыракан ҫичĕ сыпăклă кĕвĕлĕхе ытларах килĕштерет. Ку ĕнтĕ вăл несĕлсен манăҫми сасси-тĕр. Ара, хăйĕн аслă поэтăмăр Константин Иванов та хăйĕн вилĕмсĕр "Нарспи" поэмине ҫичĕ сыпăклă сăвă виҫипе ҫырнă-ҫке. Тепĕр тесен, Людмила Бахмисова та хăйĕн сăввисене йĕркесемпе кĕвĕленекен виҫепе кăна картламалла пек. Ҫĕнĕ сăвă хурăмне сăвă ҫырассине ударени правилисемпе ҫирĕплетсе, канона кĕртсе, никĕслесе хăварнă ентешĕ пек – Ҫеҫпĕл Мишши поэт пек. Людмила Бахмисовăна вара чăваш литературин тепĕр инҫетри ҫăлтăрăн ҫути илĕртсе тăрать иккен – Константин Васильевич Иванов ҫăлтăрăн ҫути. Хăйĕн "Пурнăҫ – ҫĕр пăрăнăҫ" сăвă кĕнекипех вăл поэзири суйласа илнĕ ҫулне тӳрре кăларса пырать. Людмила Бахмисова ҫухалса каймасть ҫав ҫăра сăвă картинче.

"Пурнăҫ – ҫĕр пăрăнăҫ" сукмакĕпе ĕшенмесĕр утма хавал ҫитерчĕ сăвăҫ. Кĕнеке ҫумне кĕнеке ӳсĕмлесе пычĕ, хăй калас тенине кăмăлтан калама тăрăшрĕ.

Поэзин асамлă сăпкийĕ, таса ҫăл куҫĕ унăн ҫуралнă ялĕ – Канаш районне кĕрекен Малтикас-Ҫеҫпĕл ялĕ. Ҫавăнти сарлака уйсен савăнăҫĕпе савăнса, Ҫеҫпĕл калакан "инҫе ҫинҫе уйра уяр" сăнарлăхĕпе пиеленнĕ Людмила Бахмисовăн поэзири сасси. Тăван тавралăхĕн илемĕсене, тăван халăхĕн кун-ҫул сыпăкĕсене ăша хывать.

Малтикас-Ҫеҫпĕл хĕрĕ Людмила Бахмисова тухтăр пулма шухăш тытнă. Вара Пермь облаҫĕнчи Соликамск хулинчи медицина училищине вĕренме кайса кĕнĕ. Комсомольски районĕн тĕп больницинче инфекци уйрăмĕн медицина сестринче те ĕҫлесе пăхнă. Пурнăҫ ĕҫĕ шутĕнче пулмасть унăн медицина пĕлĕвĕпе тăрăшни. Ҫак ĕҫе пăрахнă вăл. Пĕр вăхăт Канашри вакунсем юсакан заводра та вăй хурса пăхнă. Сăвăсем ҫырнă. Ҫапах та ун чунĕ тăван чĕлхе илемĕ еннелле туртăннă. Вăл И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне вĕренме кĕнĕ. Халĕ вăл ҫав университетрах ĕҫлет. Студентсене кун-ҫул анинче хăй пухнă пĕлĕвне парать, вĕсен тавра курăмне чăваш туртăмĕпе лайăх тĕревлес тесе хавхаланать.

Людмила Бахмисова – Раҫҫей писателĕсен Союзĕн членĕ. Ку яхăнта вăл тата тепĕр кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. "Хура пӳртри тĕрĕ" ятлă вăл. Ăна автор пĕр хуплашкапах чăвашла та, вырăсла та кăларнă – вырăсла М.Ставский куҫарнă. Хыҫ сăмахне те, литература критикĕ тесе, вăлах ҫырнă. Хайлав умĕн ЧР искусствисен тава тивĕҫлĕ деятелĕн Николай Теветкелĕн Л.Бахмисова пултарулăхне хакласа ҫырнă сăмахĕ пур.

"Нарспи" – ҫичĕ сыпăклă сăвăпа ҫырнă поэма. Мĕнле ҫырăннă тата. "Нарспи" поэма чăваш ҫыравҫисемшĕн паян та хăпарса ҫитмелле мар тӳпе. Л.Бахмисова, апла пулин те, ҫак виҫерен шикленсе тăман, ăна хăй пултарулăхĕн имĕпе йĕркелесе пынă. Акҫукпа Ҫемен шăпине легенда шайĕпе калăплама хавхалану ҫитернĕ. Тĕрĕре – "пир ҫинчи хĕр кăмăлне" – "пурҫăн пурнăҫ хитрине" аван сĕвемленĕ. Елькках хĕрĕ "куллен тĕрленĕ хĕр тĕррине" пирете, вулакана, сĕвĕрĕлсе пĕтмен чăваш пурнăҫĕн тĕррине тĕрленĕ пекех сăнарлăн пахалаcount пăхма сĕнет. Хайлав хамăрăн аваллăх сассине упрать, ҫичĕ сыпăклă виҫерех те паянхи поэзире тымарĕ хăрманнине калать, ҫавна ыррăн ҫирĕплетсе парать.

Кĕске сăмахăма манăн пултаруллă сăвăҫа ӳлĕм те тытнă йĕрпе ӳсĕм хыҫҫăн ӳсĕм тума ырлăх та сывлăх, ыра сунса, кĕнеке ум сăмахĕнче ҫапăннă Н.Теветкел сăмахĕсемпе ҫапла каласа вĕҫлес килет: "Людмила Бахмисова пултарулăхĕ курăмлă тата шухăш-туйăмлă. Хăйĕн сăвви-поэминче вăл чун витĕр курса ҫырать. Чи кирли – ҫакă".

**Хветĕр АГИВЕР.**